Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

80 (7611) № ✻ Юн кун, 2008 çулхи октябрĕн (юпа) 22-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Йыхрав

Тыр-пул уявне пĕрле ирттерер

Районта Тыр-пул уявне ирттересси ырă йăлана кĕчĕ ĕнтĕ. Кăçал вăл çитес шăмат кун, октябрĕн 25-мĕшĕнче иртет. Палăртмалла, мероприятисен йышĕпе те, вĕсене ирттермелли вырăнĕпе те вăл иртнĕ çулхисенчен кăшт уйрăлса тăрать. Ял хуçалăх предприятийĕсемпе шкулсенче, килти хушма хуçалăхсенче туса илнĕ ял хуçалăх продукчĕсен куравĕ район администрацийĕн çурчĕ умĕнчи лаптăкра 10 сехетре уçăлать те мĕн уяв вĕçленичченех ĕçлет.

Район центрĕн тĕп площадĕнче вара Муркаш тата Мăн Çĕнтĕр райповĕсен суту-илӳпе обществăлла апатлану предприятийĕсем ĕçлеççĕ: 10 сехетрен пуçласа 14 сехет çурăччен.

Çак кун кăмăл пуррисем районти историпе краеведени музейĕнче 10 сехетрен пуçласа 14 сехет çурăччен «Тĕнчери лĕпĕшсемпе нăрăсем» курава (4 пине яхăн экспонат) кайса курма пултараççĕ.

Уява картингистсен ăмăртăвĕ те илем кӳрĕ. Вăл «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ умĕнчи вырăнта иртĕ (10–10.30 сех.).

Спорта юратакасем валли ăмăртусем татах та пулаççĕ çак кун. Муркашри Спорт çурчĕн спорт площадкинче октябрĕн 25-мĕшĕнче армспорт енĕпе арçынсемпе хĕрарăмсем хушшинче ăмăрту иртет. 10 сехетре пуçланать.

Çав кунах ял хуçалăх предприятийĕсемпе организацисен, учрежденисен тата ял тăрăхĕсен физкультура коллективĕсем мини-футбол енĕпе вăй виçеççĕ. Ăмăрту Муркашри Спорт çурчĕн спорт площадкинчех пулать, 10 сехетре пуçланать. Командăра 10 участник тата 1 представитель пулмалла.

Октябрĕн 25-мĕшĕнче Ĕç çыннисен спартакиади шучĕпе кире пуканĕ çĕклессипе ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисен, учрежденисен тата ял тăрăхĕсен физкультура коллективĕсем хушшинче ăмăрту иртет. Ăмăрту иртмелли вырăнĕпе вăхăчĕ – Муркашри Спорт çурчĕн спорт площадки, 10 сехет. Командăра 6 çын, вăл шутран 5 участникпа 1 представитель пулмалла.

Шкул ачисемшĕн те Тыр-пул уявĕ уявлах иртĕ. Район администрацийĕн ларусен залĕнче шкул ачисен ĕç пĕрлешĕвĕсен слечĕ пулать. Кунтах ачасем юрă-ташăпа илем кӳрĕç уява. Вĕрентӳ пайĕн методпӳлĕмĕнче вара ачасен пултарулăхĕн куравĕ ĕçлĕ (10. 30–12. 30 сех.).

Орининти «Шуракăш» юрăпа ташă ансамблĕ 10 сехет çурăра куракансене сцена патне йыхравлĕ. 10 сехет те 50 минутра вара Муркашри искусство шкулĕн ачисем улăштарĕç вĕсене хăйсен композицийĕпе.

11 сехетре уява хаваслă лару-тăрура район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçать. Муркашсене уяв ячĕпе хăнасем те саламлĕç. Кунтах ĕç паттăрĕсене чыслĕç (11 сехет çурăччен).

Ун хыççăн вара сцена çинче мĕн уяв вĕçленичченех художество пултарулăх коллективĕсем хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарĕç.

Ачасемшĕн уявра татах та пулĕ саванмалли. «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ хыçĕнчи вырăнта тĕрлĕрен конкурссем иртеççĕ. Кунтах карусель те ĕçлĕ (12–14.30 сех.).

Тыр-пул уявне 14 сехет çурăра вĕçлеççĕ.

Л.ПАВЛОВА.

Вĕрентӳ ыйтăвĕсемпе

Пурнăç паян çапла тума ыйтать пулсан...

Калаçу пуçламăшĕнче манăн ашшĕ-амăшĕсене ыйту парас килет. Ялта шкул пулсан, ачăра аяккарах вырнаçнă шкула яна пулăттăр-и? Хуравсем, паллах, тĕрлĕрен пулĕç. Анчах та ачисене ялтах хăварас текенсем те сахал мар пулĕç. Вĕрентекенĕсене паллатпăр, ачасем кунĕпех шкулта, шанчăклă алăра. Тата мĕн кирлĕ? Акă, мĕнле шухăш лăплантарать пире.

– Пĕчĕк шкулта ачасем тарăн пĕлӳ илесси пирки сăмах та пулма пултарайманасть. Паян пысăк шкулсем çине тимлĕх уйăратпăр, – терĕ иртнĕ юн кун пирĕн районта пулнă Чăваш Республикин вĕрентӳ, çамрăксен политикин министрĕ Г.П. Чернова шкул директорĕсемпе тата вĕрентекенсемпе ирттернĕ тĕл пулура. – Паян пысăк шкулсене ĕçлеме, ачасене тарăн пĕлӳ пама меллĕрех.

Министр сăмахĕсем тăрăх, 200 ачаран иртекен ялти шкул паян йĕркеллĕ аталанса пыма пултарать.Паян республикăра пысăк шкулсем çине ытларах тимлĕх уйăраççĕ. Çавна май паянхи кун ыйтакан оборудованисене те вĕсемех тивĕçеççĕ. Е тата учительсен ĕç укçинех илер. Галина Петровна каланă тăрăх, паян республикипе учительсен вăтам ĕç укçи 9100 тенкĕ. Мĕн пысăкăш Муркаш шкулĕнче вара вăл 9 пин тенкĕрен те катăк.

– Сирĕн районти пысăк шкулсем паян пĕчĕк шкулсене тытса тăраççĕ, – терĕ министр.

Каласа хăвармалла, пирĕн районта, чăннипех те, пĕчĕк шкулсене пысăккисемпе пĕрлештерес ыйту çине асăрханарах (учительсем ĕç вырăнĕсĕр юлассипе те çыхăннă-çке ку ыйту) пăхрĕç, май килнĕ таран вĕсене сыхласа хăварчĕç.

– Эсир пĕр-пĕрне юрататăр, хисеплетĕр. Çав хушăрах ачасем çинчен те манмалла мар. Сахалтарах пултăр, анчах та пурне те лектĕр, текен принципа паян малалла кайма çук. Кун пекки урăх пĕр районта та çук. Çăмăл мар пулсан та, çав улшăнусене хатĕр пулмалла, штатсене чакарассинчен те пăрăнса иртме май çук пулĕ, – пĕчĕк шкулсен малашлăхĕ иккĕленӳлли палăрчĕ Г.П. Чернова сăмахĕнче.

Ĕç вырăнĕсем тенĕрен, кунта министр тĕрлĕ майсем шырама ыйтать. Сетьри учитель пулма пулать. Мĕне пĕлтерет ку: пĕр шкулта сехет сахал вĕрентекен хăйĕн предметне тепĕр шкулта та вĕрентме пултарать т. ыт. те.

Хăйĕн сăмахĕнче Галина Петровна вĕрентӳ пахалăхĕ тĕп вырăнта пулмаллине палăртрĕ. Шкулсен ĕçне хаклакан рейтингра вăл пирĕн районти шкулсене çӳллĕрех курасшăн. РФ Президенчĕн Грантне çĕнсе илессишĕн ирттерекен конкурса та районти шкулсенчен хальхи пек 25 проценчĕ çеç хутшăнни çителĕксĕр. Шкул директорĕсен ӳркенмелле мар çеç çак ĕçе йĕркелеме.

Паян ачасем пĕрлехи патшалăх экзаменне (палăртмалла, унăн кăтартăвĕсем пирĕн районпа çулленех лайăхланса пыраççĕ) тытма шикленеççĕ. Ку мĕн çинчен калать?

– Ачасене тарăн пĕлӳ памалли çинчен, - терĕ министр. –Вара вĕсем нимĕнле экзаменран та хăраса тăмĕç.

Пĕрлехи патшалăх экзаменĕ тенĕрен, Галина Петровна обязательнăй йĕркепе математикăпа вырăс чĕлхисĕр пуçне тепĕр 3 предметпа та пĕрлехи патшалăх экзаменне тытниех ачасемшĕн меллĕ пулнине палăртрĕ. Мĕншĕн тесен унăн результачĕсем малтанхи пек 1 çуллăх мар, 2 çул вăйра пулаççĕ. Çапла майпа ача пĕр çул шутланă çĕре вĕренме кĕреймесен, тепĕр çул çав баллсемпех тепре вĕренме кĕме тăрăшма пултарать.

Министр палăртнă тепĕр самант. Вĕрентекенсем аттестаци витĕр тухни хăйсен пĕлĕвне татах та хăпартмалли çинчен калать.

– Хăйсен предмечĕсемпе пĕрлехи патшалăх экзаменне «3» паллăлăх тытнă вĕрентекен ăçтан-ха ачасене тарăн пĕлӳ пама пултартăр, - терĕ министр. – Кăçал категори илме татах та йывăртарах пулать.

Пахалăхлă пĕлӳ парас тенĕрен, Галина Петровна шкул библиотекисенче «ревизи» тумаллине палăртрĕ. Иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче усă курнă учебниксене мĕншĕн тытас библиотекăра? Вĕсен йышĕ çĕннисене уйăрса парассинче чăрмав çеç кӳрет.

Тата кирлĕ ыйтусемпе Интернетпа усă курса юлмалла. Мĕншĕн тесен унпа шкулсем тӳлевсĕр усă курасси çĕнĕ çултан вĕçленет.

Кунта тата çакна та каласа хăвармалла. 9 класс хыççăн шкултан каякан ачаран шкулăн куç вĕçертмелле мар. Вăл ниçта та вĕренме каймасан, яваплăх шкул çинчех юлать – ачан вăтам пĕлӳ илмелле: е шкулта, е училищĕсемпе ятарлă вĕренӳ заведенийĕсенче.

Ачасем шкулта тарăн пĕлӳ илме пултарччăр тесе паян патшалăх татăклă утăмсем тăвать. Учительсен ĕç укçине тариф сеткипе хакласси çитес çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пăрахăçланать. Ачасене пахалăхлă пĕлӳ паракан вĕрентекенсен ĕç укçине ӳстерме хавхалантару фондне йĕркеленĕ ĕнтĕ. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче вăл 10 процентпа танлашрĕ, кăçал 20 процентпа. Министр палăртнă тăрăх, çĕнĕ çултан вăл татах ӳсмелле: 25 процентне бюджетпа йышăнса хăварнă, татах та пысăкрах пулма та пултарать.

–Ун пек чухне учительсем ĕç результачĕ курăнтăр тесе тăрăшма пуçлĕç. Атту халь хăйсен урокне ирттерме пырса каяççĕ те шкула (кун пек тĕслĕхсем те пур), ĕç укçи пĕчĕк тесе пăшăрханаççĕ тата, – терĕ Галина Петровна.

Министр малашне вĕрентекенсен эрнере 36 сехетрен кая мар ĕçлемеллине палăртрĕ. Ку вăл апат вăхăтне кĕртмесĕр.

Галина Петровна çитес çулта учительсен ĕç укçийĕ 2006 çулхинчен 2 хут пысăкрах пулмаллине палăртрĕ. Шкулсенче улăштарайми критерисем çинче тĕплĕн чарăнчĕ. Тĕслĕхрен, вĕрентекенсен ĕç укçийĕ тариф сеткипе пăхнă шайринчен пĕчĕк пулмалла мар. Чи пĕчĕк ĕç укçин шайне те тытса пымалла. Ĕçне кура ĕç укçи тӳлемелле тенĕрен, министр кунта техслужащисене штатра тытмасăр, ĕç килĕшĕвĕпе ĕçлеттерни вырăнлине палăртрĕ т.ыт. те.

Галина Петровна вĕрентӳри чылай проблема çинче тĕплĕн чарăнчĕ.

Паян, чăннипех те, пур ашшĕ-амăшĕ те ачисене пахалăхлă пĕлӳ пама хатĕрленсех çитеймен пулĕ. Анчах та шкулсене паян патшалăх класра миçе ача тата пĕр вĕрентекен пуçне класра миçе ача лекнине кура уйăрать пулсан, çакна тĕпе хурса ĕçлемех тивет. Çапла тума шантарчĕ район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов. Пурнăç паян çапла тума ыйтать пулсан, ăçтан-ха пăрăнайăн унăн чăнлăхĕнчен?

Л.ТУКТИНА.

Н.М. Бударин депутат суйлавçăсемпе тĕл пулчĕ

Ĕнер пирĕн районта Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕ Н.М. Бударин пулчĕ. Малтанах вăл район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа тĕл пулчĕ. Тĕл пулура вĕсем районăн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн ыйтăвĕсене сӳтсе яврĕç.

Çавăн пекех депутат Муркаш лицейне те çитсе курчĕ, кунти педагогсемпе тата вĕренекенсемпе тĕрлĕрен ыйтусене пăхса тухрĕ.

Кайран вăл обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче граждансене хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнчĕ.

Сăн ӳкерчĕкре: обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче граждансене йышăннă самант.

Официально

В сегодняшнем номере - Приложения к райгазете

В Приложениях к райгазете от 22 октября 2008 года печатаются:

- решение Собрания депутатов Александровского сельского поселения от 26.09.2008 г. № С-20/2 об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Александровском сельском поселении, отнесенных законодательством РФ и ЧР о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»;
- решение Собрания депутатов Большесундырского сельского поселения от 22.09.2008 г. № С-25/1 об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Большесундырском сельском поселении, отнесенных законодательством РФ и ЧР о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»;
- решение Собрания депутатов Ильинского сельского поселения от 25.09.2008 г. № С-23/2 об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Ильинском сельском поселении, отнесенных законодательством РФ и ЧР о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»;
- решение Собрания депутатов Кадикасинского сельского поселения от 23.09.2008 г. № С-17/2 об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Кадикасинском сельском поселении, отнесенных законодательством РФ и ЧР о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»;
- решение Собрания депутатов Моргаушского сельского поселения от 03.10.2008 г. № С-20/2 об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Моргаушском сельском поселении, отнесенных законодательством РФ и ЧР о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»;
- решение Собрания депутатов Москакасинского сельского поселения от 30.09.2008 г. № С-24/1 об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Москакасинском сельском поселении, отнесенных законодательством РФ и ЧР о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»;
- решение Собрания депутатов Орининского сельского поселения от 24.09.2008 г. № С-21/2 об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Орининском сельском поселении, отнесенных законодательством РФ и ЧР о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»;
- решение Собрания депутатов Сятракасинского сельского поселения от 23.09.2008 г. № С-22/1 об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Сятракасинском сельском поселении, отнесенных законодательством РФ и ЧР о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»;
- решение Собрания депутатов Тораевского сельского поселения от 25.09.2008 г. № С-19/1 об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Тораевском сельском поселении, отнесенных законодательством РФ и ЧР о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»;
- решение Собрания депутатов Хорнойского сельского поселения от 26.09.2008 г. № С-23/2 об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Хорнойском сельском поселении, отнесенных законодательством РФ и ЧР о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»;
- решение Собрания депутатов Чуманкасинского сельского поселения от 29.09.2008 г. № С-19/3 об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Чуманкасинском сельском поселении, отнесенных законодательством РФ и ЧР о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»;
- решение Собрания депутатов Шатьмапосинского сельского поселения от 26.09.2008 г. № С-22/2 об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Шатьмапосинском сельском поселении, отнесенных законодательством РФ и ЧР о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»;
- решение Собрания депутатов Юнгинского сельского поселения от 26.09.2008 г. № С-24/3 об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Юнгинском сельском поселении, отнесенных законодательством РФ и ЧР о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»;
- решение Собрания депутатов Юськасинского сельского поселения от 30.09.2008 г. № С-24/2 об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Юськасинском сельском поселении, отнесенных законодательством РФ и ЧР о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»;
- решение Собрания депутатов Ярабайкасинского сельского поселения от 24.09.2008 г. № С-19/3 об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Ярабайкасинском сельском поселении, отнесенных законодательством РФ и ЧР о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»;
- решение Собрания депутатов Ярославского сельского поселения от 26.09.2008 г. № С-18/2 об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Ярославском сельском поселении, отнесенных законодательством РФ и ЧР о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления».